Вăрлăх хатĕрлетпĕр

# Çĕр ĕçченĕ, сана çур аки шутлаттарать-и?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ СУРТРИ ВĂРЛĂХĔСЕН ПАХАЛĂХĔ МĔНЛЕ ПУЛНИНЕ КĂТАРТНИ (февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Вăрлăх кирлĕ. 2. Тĕрĕслеттернĕ (центнерпа). 3. Кондициллĕ вăрлăх (процентпа). 4. Кондицие ларман вăрлăх пĕтĕмпе (центнерпа).**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 1800 | 1800 | 67 | 600 |
| «Волга» | 500 | 0 | 0 | 0 |
| «Восток» | 1400 | 1790 | 92 | 142 |
| «Герой» | 2070 | 2135 | 72 | 591 |
| Ильич яч. хис. | 3000 | 3600 | 50 | 1800 |
| ВТМ | 300 | 0 | 0 | 0 |
| Ленин яч. хис. | 850 | 802 | 56 | 352 |
| «Лидер» | 300 | 0 | 0 | 0 |
| «Оринино» | 2200 | 2209 | 83 | 365 |
| «Передовик» | 1830 | 1830 | 61 | 720 |
| «Свобода» | 3820 | 4070 | 95 | 210 |
| «Сеятель» | 940 | 940 | 88 | 110 |
| Суворов яч. хис. | 2380 | 2267 | 100 | 0 |
| «Рассвет» | 1150 | 1050 | 33 | 700 |
| «Ударник» | 3870 | 3820 | 57 | 1629 |
| «Хлебороб» | 340 | 344 | 13 | 299 |
| Чапаев яч. хис. | 1650 | 1650 | 63 | 610 |
| «Чемеево» | 800 | 800 | 0 | 800 |
| Чкалов яч. хис. | 1600 | 1715 | 66 | 590 |
| Мичурин яч. хис. | 1200 | 1200 | 17 | 1000 |
| КФХ Матвеев | 300 | 278 | 0 | 278 |
| КФХ Бархаткин | 920 | 920 | 0 | 920 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **33220** | **33220** | **65** | **11716** |



**Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕнче ĕçлекенсене куратăр. Сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла: Р. Александрова, В. Морозов, А. Семенов, П. Замятина, А. Налимова.**

Çур акиччен вăхăт сахалрах та сахалрах. Çав ответлă тапхăр валли вăрлăх хатĕрлессипе паян епле ĕçлетпĕр-ха? Хуравĕ çӳлерех илсе кăтартнă таблицăран аван курăнать. Вăрлăхăн пысăк пайĕ тасалăхпа ака кондицине ларманни хуçалăхсем гербицидсемпе япăх ĕçленине тата вырма вăхăтĕнче йĕтемсем çинчи ĕçе япăх йĕркеленине кăтартать. Паян вара хывса хăварнă вăрлăх çĕр ĕçченĕн чунне тивĕçтереймест. Паян пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен тĕп тĕллевĕ – тырăна аласа ака кондицине çитересси, пысăк репродукциллĕ вăрлăха туянма мелсем тупасси. Ку ĕçе кая хăварас марччĕ.

**В. МОРОЗОВ,**
**«Россельхозцентр» филиалĕн**
**Муркашри пайĕн пуçлăхĕ.**

Хресчен, çур аки алăкран шаккать!

# Паха ĕç никĕсĕнче – юсавлă техника

***Çурхи уй-хир ĕçĕсен планĕсене туллин те пахалăхлăн пурнăçлас тĕллевпе паян юсавра ларакан ял хуçалăх техникине ĕçе хатĕрлесе çитерессипе çителĕклĕ вăй хуратпăр-и-ха? Ыйтусем нумай. Çĕр ĕçĕн тĕп пайне паянхи хресчен техника пулăшăвĕпе кăна пурнăçланăран ял хуçалăхĕн çак сферинче çурхи уй-хир ĕçĕсене хатĕрленесси епле пынипе интересленсе патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕпе С.А. НИКОЛАЕВПА калаçу ирттертĕмĕр.***

**– Сергей Александрович, техникăна ĕçе хатĕрлесси пĕр кунхи ĕç мар. Хĕвел кунсерен çӳлтен çӳле хăпарнине пăхса-сăнаса хресчен хире тухиччен унăн ĕçлемелли техникăна техосмотр тăратмалла та ĕçе тухма ирĕк илмелле. Çапла вĕт?**

– Çур аки çывхарса пынă май сирĕн ыйту нихăçанхинчен те ытларах кун йĕркине çывăх тăрать. Çавăнпа та йăнăшни пирки кунта сăмах пулма та пултараймасть. Чăн çĕр ĕçченĕ паян эсир каланине хăйĕн кулленхи тĕллевĕ туса çур акине хатĕрленет: ĕç планĕ тăвать, вăрлăх янтăлать, минераллă удобрени тата сĕрмелли-çунтармалли материалсем туянать, хĕл каçнă техникăна юр айĕнчен кăларса юсама пуçлать, киввине çĕннипе ылмаштарать т. ыт. те. Пĕр сăмахпа каласан, ларса канма та вăхăт çук унăн паян. Пирĕн службăн çак вăхăтри тивĕçĕ – çĕр ĕçченĕ техникăна çур акине епле хатĕрленине пăхса тăрасси, вăхăтра асăрхаттарса хатĕрленӳ пахалăхне ӳстерме пулăшасси, ĕçе юсавлă техникăпа тухма ирĕк парасси. Çакна валли РФ Правительствин 2002 çулхи 117-мĕш номерлĕ постановленийĕ те пур. Унта тракторсене, хăй тĕллĕн çӳрекен çул-йĕр тата строительство техникине, вĕсен прицепĕсене патшалăх техника тĕрĕслевне тăратмалли йĕркене çирĕплетнĕ. Вăл паян пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçисемшĕн, инженерсемпе механизаторсемшĕн тĕп саккун пулса тăрать. Унпа килĕшӳллĕн кăçал тракторсемпе вĕсен прицепĕсене пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен апрель уйăхĕнче, предприятисемпе организацисен тата хăйсен харпăрлăхĕнче трактор тытакан граждансен техника хатĕрĕсене техосмотра апрель-май-июнь уйăхĕсенче тăратмалла. Çакна валли Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти тĕрлĕ тĕслĕ машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. П. Димитриев иртнĕ кунсенче приказ кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн пирĕн районти хуçалăхсемпе предприятисем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техникăна тытакан уйрăм граждансем валли кăçалхи техосмотр графикне çирĕплетнĕ. Вăл ял тăрăхĕсенчи пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрле уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчи ял хуçалăх техникишĕн те пĕр кунта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен машинăпа трактор паркĕсенче çак кунсенче иртĕ (виççĕмĕш колонкăра регистрациленĕ техника мĕн чуль пурри):

| | | |
|---|---|---|
| **Муркаш ял тăрăхĕ** | | |
| Е. Андреев яч. хис. | 09.04 | 14 |
| Уйрăм граждансем | 09.04 | 13 |
| **Ильинка ял тăрăхĕ** | | |
| «Волга» | 14.04 | 3 |
| «Хлебороб» | 14.04 | 13 |
| Уйрăм граждансем | 14.04 | 35 |
| **Оринин ял тăрăхĕ** | | |
| «Восток» | 30.03 | 14 |
| «Оринино» | 30.03 | 30 |
| Уйрăм граждансем | 30.03 | 16 |
| **Ярапайкасси ял тăрăхĕ** | | |
| «Герой» | 31.03 | 22 |
| «АФ «Лидер» | 31.03 | 13 |
| Уйрăм граждансем | 31.03 | 46 |
| **Турай ял тăрăхĕ** | | |
| «Динамо» | 03.04 | 5 |
| Суворов яч. хис. | 03.04 | 24 |
| Уйрăм граждансем | 03.04 | 24 |
| **Çатракасси ял тăрăхĕ** | | |
| «Свобода» | 06.04 | 47 |
| К. Иванов яч. хис. | 06.04 | 11 |
| Уйрăм граждансем | 06.04 | 35 |
| **Уйкас Янасал ял тăрăхĕ** | | |
| Ильич яч. хис. | 01.04 | 24 |
| Уйрăм граждансем | 01.04 | 10 |
| **Катькас ял тăрăхĕ** | | |
| «ВТМ» | 15.04 | 1 |
| «Моргаушская» | 15.04 | 14 |
| Уйрăм граждансем | 15.04 | 64 |
| **Хорнуй ял тăрăхĕ** | | |
| Ленин яч. хис. | 08.04 | 24 |
| Уйрăм граждансем | 08.04 | 23 |
| **Москакасси ял тăрăхĕ** | | |
| «Передовик» | 13.04 | 20 |
| Уйрăм граждансем | 13.04 | 53 |
| **Ярославка ял тăрăхĕ** | | |
| «Сеятель» | 17.04 | 12 |
| ИП Васильев Е. Б. | 17.04 | 9 |
| Уйрăм граждансем | 17.04 | 30 |
| **Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ** | | |
| «Рассвет» АФ» | 10.04 | 22 |
| КФХ Бархаткин В. В. | 10.04 | 6 |
| КФХ Толстов А. И. | 10.04 | 7 |
| КФХ Гаврилов В. А. | 10.04 | 5 |
| Уйрăм граждансем | 10.04 | 64 |
| **Йӳçкасси ял тăрăхĕ** | | |
| «Ударник» | 07.04 | 70 |
| Уйрăм граждансем | 07.04 | 35 |
| **Чуманкасси ял тăрăхĕ** | | |
| Чапаев яч. хис. | 02.04 | 24 |
| Чкалов яч. хис. | 02.04 | 14 |
| Уйрăм граждансем | 02.04 | 40 |
| **Шетмĕпуç ял тăрăхĕ** | | |
| «АПФ «Колос» | 16.04 | 5 |
| КФХ Михайлов А. Н. | 16.04 | 4 |
| Уйрăм граждансем | 16.04 | 37 |
| **Юнкă ял тăрăхĕ** | | |
| Уйрăм граждансем | 20.04 | 32 |

Хуçалăхсен ертӳçисемпе инженерĕсем çур аки умĕн çак графика çирĕп пăхăнасса шанас килет. Техникăна ĕçе юрăхлă хатĕрлени – çур акири ăнăçăвăн пĕрремĕш утăмĕ.

**– Хресчен ĕçĕ çур акирен пуçланать кăна. Апла пулсан ытти ĕçсем валли те ял хуçалăх техникине техосмотр тăратмалла. Çапла мар-и?**

– Кашни ĕçех вăхăтра та пахалăхлă иртерес тесен алă айĕнче тăтăшах юсавлă техника пулмалла. Çавăнпа та пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех предприяти-организацисен те, шкулсен те хăйсен тракторĕсемпе прицепĕсене тĕрĕслеве тăратмалла пулĕ. Кун пирки каярах пĕлтерĕпĕр.

**– Сергей Александрович, техосмотра хатĕрленнĕ чух мĕн çине ытларах тимлĕх уйăрмалла?**

– Техосмотра хатĕрленĕ техника çинче пур механизмсемпе агрегатсен те ĕçлемелле, вĕсем таса, тормоз системипе руль управленийĕн т. ыт. те юсавлă пулмалла, тракторсемпе ытти хăй тĕллĕн çӳрекен техника çинче пушартан сыхланма огнетушитель, ĕçлекенсене вăхăтра медицина пулăшăвĕ пама медицина аптечки, авари чарăнăвĕн паллисем пулмалла. Техника тĕрĕслевне хатĕрленнĕ чух инженерсемпе механизаторсен техпаспорт, техталон, регистраци свидетельстви тата кашни механизаторăн медицина справки пулмалли çинчен асрах тытмалла. Кунпа пĕрлех тракторист çумĕнче ирĕк паракан категориллĕ удостоверени – чи кирли. Техосмотра хатĕрленнĕ май тракторсемпе прицепсене çуса тасатмалла, сăрламалла, çумра страховани полисĕ пулмалла.

Кам та кам техникăна техосмотра хатĕрлемелли сĕнӳсемпе предписанисене патшалăх техника надзорĕн районти инспекцийĕнче илме ĕлкĕреймен, вĕсене хуçалăх ертӳçисемпе инженерĕсен хальтерех килсе илмелле, вĕсемпе килĕшӳллĕн ĕçлемелле.

Юсавлă техника çеç çур аки пахалăхне ӳстерĕ, çĕр ĕçченне пысăк тухăç илме шанчăк парĕ.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

«Сывлăх» наци проектне пурнăçласа

# «Чирлисем сывалччăр», –

терĕ калаçăва пĕтĕмлетсе Р. Кириллов рентген-лаборант.

Пушаннă ĕç пӳлĕмĕнче Ренат Григорьевичпа иксĕмĕрех калçса ларатпăр. Пирĕн калаçу шăнăрĕ – халăхăмăр сывлăхĕ тата çакăн çине патшалăх тӳрремĕнех çаврăнса пăхни.

– Хамăр та вăй питти çулсенче кăна-ха, анчах пурнăç улшăнăвĕсене курни тата тӳссе ирттерни, вĕсемпе пĕрле халăхăмăр пурнăçĕ те куç умĕнчех улшăнни анлă. Юлашки çулсенче сывлăх хуралне ырă улшăнусен варкăшĕ килсе çапрĕ те çĕкленӳллĕ кăмăлпа ĕçлес тытăр!», – тесе шурă халатлă арçын ачан аллине рентген ӳкерчĕкĕ туса та илчĕ. «Нумай кĕтмелле-и?» – пулчĕ амăшĕн ыйтăвĕ. «Кăшт тăхтăр!» – терĕ те тухтăр, алăкран тухса çухалчĕ. Тĕлĕнмелле, анчах тепĕр 10 минутран вăл каялла таврăнса рентген хутне хирурга тăсса пачĕ. Çакăн хыççăн хирургăн пулăшăвĕ те вырăнлă пулчĕ: икĕ сехете яхăн куççуль юхтарнă ача шăпланса ыйха путрĕ...

– Сахал пулнă-и çакнашкал чĕнӳсем? – интересленетĕп Ренат Григорьевичран.

– Сахал-нумай тесе суяс



туйăм вăй илчĕ, – кăмăллăн калаçать Муркашри тĕп больницăн пуян опытлă рентген-лаборанчĕ Р. Кириллов иртнĕ çулсене ĕнерхи-паянхи пурнăç улшăнăвĕсемпе танлаштарса. Танлаштармалли вара çук мар. Çакănта ытти чух калаçма юратакан Ренат Григорьевич шăпланчĕ.

... Вунă çулхи ачаччĕ вăл ун чухне. Йывăр чирленĕскерне пĕрлешӳллĕ хуçалăхра кăна ĕçлекен ашшĕпе амăшĕ таçта та илсе çитерчĕç. Вĕсен тăрăшулăхне кура чир каялла чакрĕ. Анчах çак йывăр самант арçын ача шухăшлавĕнче анлă йĕр хăварчĕ. Тĕрĕсрех каласан, унăн малашнехи пурнăçне никĕслерĕ. Паян Ренат Григорьевич иртни пирки шухăшлать те тĕлĕнет: епле 10 çулхи ача çавăн пек çирĕп тĕллев тытма пултарнă-ха? Анчах пурнăç кукри-макринче ку тĕрĕслĕхе килсе тухрĕ. Çав йывăр самант хыççăн тепĕр 12 çултан Шупашкарти медицина училищине вĕренсе пĕтерсен, Ренат сывлăх хуралçи пулса тăчĕ. Тăван района таврăнсан Мăн Шаптак каччи валли тĕп больницăри васкавлă пулăшу уйрăмĕнче вырăн тупăнчĕ. Çулталăк иртсен вара больницăн ун чухнехи тĕп врачĕ Г. М. Огурцов малалла пăхакан çамрăка тивĕçлĕ канăва каякан пуян опытлă Николай Филиппович Филиппов рентген-лаборант вырăнне сĕнчĕ. Килĕшрĕ яш аслă юлташĕн сĕнĕвĕпе. Килĕшрĕ те 5 уйăх вĕреннĕ хыççăн çак ĕçе пĕтĕм пурнăçне халалларĕ.

... Çур çĕр варринче больницăна алă ыратнипе сиксе йĕрекен ачана илсе пычĕç. Дежурствăри хирург амăшĕн сăмахĕсемпе паллашнă хыççăн рентген-лаборанта чĕнме ыйтрĕ – ачан аллине юсама пуçличчен рентгенпа пăхмалла. 15 минут та çитмерĕ, алăкран Ренат Григорьевич кĕрсе тăчĕ, пулăшу кĕтекен амăшĕн куçĕсенчен тинкерчĕ, лăшсăр тапаланакан ача çине пăхрĕ. «Кăшт тăхтăр! Ачан аллине меллĕрех килмест. Эрне варринче питех йышлă мар пулсан, тунтипе ытлари кун талăкне 55-60 ӳкерчĕк тăватăп. Чирлисем хăвăртрах сывалччăр. Çак тĕллевпе çĕрле те, кăнтăрла та эпĕ ĕçре. Телее, больницăран катара пурăнмастăп та пĕр чĕнĕве те нумай кĕттерместĕп, – терĕ ĕçне чунĕпе парăннă Ренат Григорьевич.

Ĕçне чунĕпе парăннă тенĕрен, çак кунсенче Ренат Григорьевич Кириллов Муркашри тĕп больницăра рентген-лаборантра ĕçлеме пуçлани 25 çул çитрĕ. Ку вăл калама кăна çăмăл. Мĕн чуль ун хыçĕнче чирлĕ çыншăн унăн çывăх çыннисен чун ыратăвне куçпа курса пăшăрханни, кану кунне татни, çĕрле ыйхă вĕçтерни?..

Йывăр пулсан та, пурнăç ырă еннеллех улшăнать. Акă унччэнхи çулсенче рентген ӳкерчĕкĕ «пиççе» çитессе çуршар кун кĕтеттĕмĕр пулсан, юлашки çулсенче «Сывлăх» нацпроект çав вăрăм вăхăта палăрмаллах пĕчĕклетрĕ. Халĕ чирлисем хăйсене тивĕçлĕ пулăшу пама пуçласса 10-15 минут çеç кĕтеççĕ. «Çакăнта манăн хамăр больницăн тĕп врачне В. Данилова та ырăпа палăртас килет. Вăл тăрăшнипе больницăна çĕнĕ техника сахал мар килчĕ, чирлисен сывлăхне сиплесси палăрмаллах лайăхланчĕ. Çакă рентген кабинетĕнче те курăмлă. Кунта халĕ Японире туса кăларнă «Тошиба» аппарат вырнаçтартăмăр, тунă ӳкерчĕксене 10-15 минутра пленка çине кăларма та çĕнĕ машинăпа усă куратпăр», – сывлăх хуралĕн аталанăвĕшĕн савăнăçне пытармасăр калаçать юлташăм.

Мăшăрĕпе – районти çыхăну узелĕн операторĕпе – Зоя Николаевнапа Ренат Григорьевич Кирилловсем икĕ ывăл çуратса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Юратнă ĕç, тулли çемье – çакă мар-и-ха вăл пурнăç телейĕ?

**А. ПЕТРОВ.**